ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ГРАЖДАНСЕН СЫВЛĂХНЕ СЫХЛАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче граждансен сывлăхне сыхласси çинчен" 2012 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 59 №-лĕ саккунне ("Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 10 №-сем; 2014, 12 №; 2016, 10 №; 2017, 2, 9 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2018, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 7 статьяра:

а) çакăн пек çырса 1^1-мĕш пункт хушса хурас:

"1^1) сывлăха сыхлас ĕç ыйтăвĕсене йĕркелесе пырас, çав шутра усă курма меллĕ тата пахалăхлă медицина пулăшăвĕ памалли майсемпе тивĕçтерес, халăх сывлăхне упрас тата çирĕплетес, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма условисем туса хурас, граждансене хăйсен сывлăхĕ çине яваплăн пăхма хăнăхтаракан культурăна йĕркелес енĕпе мерăсем пурнăçласси;";

ă) 10^1-мĕш тата 10^2-мĕш пунктсенче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

б) 14^3-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

2) 8 статьян 1-мĕш пайĕн 3^1-мĕш пунктĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕсене" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсене" сăмахсемпе улăштарас;

3) 16 статьян 1-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"1. Полномочиллĕ орган туберкулез чирĕ сарăлассинчен асăрхаттарас ĕçе йĕркелет, полномочиллĕ органа пăхăнса тăракан медицина организацийĕсенче туберкулезпа чирлĕ çынсене туберкулезран сыхланмалли пулăшăва панине кĕртсе.";

4) 17^1 статьян 1-мĕш пайĕнче "Федераци саккунĕн 93 статйин 1-мĕш пайĕн 6-мĕш пункчĕпе" сăмахсене "Федераци саккунĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

5) 18 статьян 1-мĕш пайĕн иккĕмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

6) 18^2 статьяра "Социаллă тивĕçтерĕвĕн пĕрлехи патшалăх информаци системине" сăмахсене "патшалăхăн "Социаллă сферăри пĕрлехи централизациленĕ цифра платформи" информаци системине" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун, çак Саккунăн 1 статйин 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрекен 6-мĕш пункчĕсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
75 №